* * *

Хăш чух çыраççĕ е пуплеççĕ:
«Эп вилĕме куçĕсенчен
Пĕрре çеç мар пăхсаттăм»,— теççĕ.
Ку йăнăшрах пуплев иккен.

Хăрах кăна-мĕн вилĕм куçĕ:
Пĕчченлĕх камерăн тĕнни,
Пăшал кĕпçин качалла пуçĕ —
Ак «вилĕм куçĕ» текенни.

Хăлхам ман илтрĕ, куçăм курчĕ,
Эп астăватăп пĕтĕмпех.
Халичченех сип-сивĕ хурçă
Тăнлав çумне тивертнĕ пек...

* * *

И говорят, и пишут часто:
«Я смерти заглянул в глаза».
Что ж, тем, кто пишет,
есть чем хвастать,
Но я одно хочу сказать:

Мне кажется смерть одноглаза —
Будь это карцера глазок,
Будь цель избравший по приказу
Ствола ружейного зрачок.

Я видел этот глаз воочью...
И нынче давит грудь тоска,
Когда нет-нет да вспомнишь ночью
Вдруг холод стали у виска.